24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
6
КĔҪНЕРНИКУН
262 (5977) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи мирлĕ пурнăҫа пăснă тата Германие, Европăна, ССР Союзне вăрҫа кĕртсе янă гитлерла империалист-разбойниксем тĕп пулччăр!

(Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

МИРЛĔ ШУХĂШ-КĂМĂЛПА ПУРĂННИ ХАЛĔ СИЕНЛĔ

Пиллĕкмĕш уйăх ĕнтĕ отечественнăй вăрҫă пулса пырать. Пĕтĕм тĕнчери ĕҫçыннисен социализмлă тăван çĕршывĕ çине ирсĕррĕн килсе тапăннă фашистла захватчиксене хирĕҫ пирĕн пĕтĕм халăх, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот этемлĕх халиччен курман паттăрлăхпа кĕрешеҫҫĕ. Çак историллĕ çапăçура совет халăхĕн çĕршер те пиншер геройĕсем палăрчĕҫ. Тăшман калама çук пысăк сухатусем тăвать.

Анчах эпир пурăнакан кунсен хăрушлăхĕ çаплах ӳссе пырать-ха. Пысăк сухатусем тунине пăхмасăр, пирĕн çĕрĕн кашни пусăмĕ унăн хакла ларнине пăхмасăр, тăшман малалла талпăнать, пирĕн промышленноҫăн пысăк центрĕсене туртса илме хăпăнать. Вăл сивĕ хĕл килсе çитиччен мĕн чухлĕ те пулин ӳсĕмсем туса юласшăн.

Пирĕн çĕршывăн тăшманĕ чее те ултавлă. Вăл пире хирĕҫ кĕрешнĕ çĕрте темĕнле ирсĕр майсемпе те усă курать. Фронтра этемле мар тискер ĕҫсем тунипе пĕрлех, вăл пирĕн тыла хавшатма, халăх хушшинче паника сарма тăрăшать. Пирĕн тыла шала кĕрсе кайса мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахса, парашютистсем антарса хăварса, тĕрлĕ суя листовкăсем салатса, тăшман пирĕн халăхăн паттăрлăхне чакарасшăн, пирĕн çĕнтерес шанчăка хавшатасшăн тăрăшать.

Çакăн пек хĕрӳллĕ обстановкăра кашни хула, кашни ял умĕнче хăрушлăх тăрать. Халĕ пирĕн çĕршывра мирлĕ, хăрушлăхсăр хуласемпе ялсем çук. Кашни ĕҫçыннисем, вăл кирек хăш хулара е ялта пурăнать пулсан та, хăйне хăй отечественнăй вăрҫă участникĕ тесе шутламалла. Мирлĕ шухăш-кăмăлпа, йăваш чунлă пулса пурăнни халĕ питех те сиенлĕ. Пирĕн пурнăҫшăн, ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн татăклă çапăçу пынă вăхăтра харпăрхăй интересĕшĕн çеҫ тăрăшни, общественнăй интерессене манса хăварни пачах пулмалла мар.

Çапах та пур-ха пирĕн хушăра лăпкă пурнăҫпа, йăваш чунлă пулса пурăнма пăрахман çынсем. Вĕсем вăрҫă хăрушлăхĕ çинчен, сыхăлăх çинчен ытларах сӳпĕлтетме юратаҫҫĕ, пысăк резолюцисем çыраҫҫĕ, хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каланҫĕ. Анчах чăннипе нимĕн те тумаҫҫĕ, ĕлĕкхи пекех лăпкăн та йăвашшăн ăшăнса пурăнаҫҫĕ. Тахҫанах вăхăт ĕнтĕ çакăн пек сиенлĕ те намăс йăлана пăрахма! Çĕршыв оборонине тĕреклетесси çинчен сăмахпа сӳпĕлтетме пăрахса, ĕҫе куҫма тахҫанах вăхăт çитнĕ.

Пуринчен малтан пирĕн сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕҫе вăйлатмалла. Самозащита групписем пурте боевой заданисене пурнăҫа кĕртме хатĕр тăмалла. Кашни гражданин хăйĕн выранне пĕлмелле, тăшман самолечĕсем килсе тапăнсан кам ăҫта пулмалли тата мĕн тумалли кашни çынăн палла пулмалла. Нимĕн тумасăр сĕтĕрӳçе сӳрекенсем сывлăшран тапăннă вăхăтра пулмалла мар.

Революциллĕ сыхăлăха пирĕн нихçанхи пек мар сӳле çĕклемелле. Тăшманăн агенчĕсене палласа илме вĕренмелле, паникерсене, дезертирсене тата суя хыпарсем саркансене çийĕнчех тытса влаҫсен аллине памалла. Предприятисемпе учрежденисен тата колхозсен пурлăхне сыхлас ĕҫе кăтартуллăн организацилемелле. Предприятисенчи постсене йĕркелесе çитерсе тĕреклетмелле, урамсенче хурал тăрас ĕҫе организацилемелле, талăкĕпех дежурный тăратассине пуҫарса ямалла. Çак ĕҫсене тăрăшса туса пырасси — кашни гражданинăн хисеплĕ тивĕҫĕ пулса тăрать. Вăл тивĕҫе ĕҫе кĕртмесĕр тăракансем хăйсем те тăшмана пулăшакансем пулса тăраҫҫĕ.

Тăшман уйрăмăнах паника тума тăрăшать. Вăл мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахса халăха хăратса ӳкерме шутлать. Çак ирсĕр ĕҫĕн хăрушлăхне кашнин пĕлсе тăрас пулать. Вăрҫă хăрушлăхне пирĕн ăнланса илмелле, мирлĕ шухăш-кăмăлпа пурăнма пăрахмалла. Анчах çакă вăл паникăна кĕрсе ӳкмеллине, хăраса ӳксе тăна çухатмаллине, пуҫа усмаллине пĕлтермест. Пачах урăхла, пирĕн яланах пĕрлĕхлĕ, çирĕп пулмалла, дисциплинăна, организованноҫа тĕреклетсе пымалла. Тăшман кăларса тăратакан кирек мĕнле хăрушлăха та чăтăмлă пулса тӳссе иртерме, хăрушлăха сирсе ярас ĕҫе тавçăруллă та пуҫаруллă пулма хатĕр тăмалла. Коммунистсемпе комсомолецсен предприятисемпе колхозсене чăн-чăн оборона крепоçĕ туса хурассишĕн кĕрешес ĕҫре пример кăтартса пырас пулать.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланма яланах хатĕр тăрар, тăшман агенчĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырса, камăр ретсене çирĕплетер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 4-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕҫ мĕнпур фронтсенче çапăçнă. Фронтăн Крым, Можайск тата Калинин участокĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче нимĕҫсенне 5 çамолет пĕтерсе тăкнă.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕҫсенне 11 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăҫ тата Кăнтăр фрончĕсенче çапăçакан пирĕн авиачăсем тăшмана малалла та пысăк сухату кӳреҫҫĕ. Ноябрĕн 3-мĕшĕнче противникăн войскисем çине пирĕн авиаци ăнăçлăн пырапыра тапăннине пула 22 танка, пехотăпа çар грузĕ тиенĕ 250 автомашинăна, 15 полевой орудине, нумай зенитнăй пулеметсемпе боеприпассене тата çар снаряженийĕ усракан темиçе склада пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиачăсенчен пĕрин летчикĕсем юлашки икĕ кун хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕҫсен 14 танкне, çар снаряженийĕ тиенĕ 260 автомашинине, тĕрлĕрен калибрлă 16 орудине, мотоциклĕсене, повозкисене тата ытти çар снаряженийĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна ытла сапаласа ярса пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнче çапăçакан Куцевалов юлташăн летчикĕсем виҫĕ кун хушши çапăçнă вăхăтра тăшман пехотине 8 ротăна сити, вооружени тиенĕ 300 ытла автомашинăна, горючи тултарнă 7 цистернăна тата 6 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тытăкăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем нимĕҫсен фашистла войскисен физически тата моральлĕ состоянийĕ начарланса пынине кăтартса параҫҫĕ. Тытăкăна лекнĕ нимĕç ефрейторĕ Курт Нейман хăйне допрос тунă чухне çапла каласа панă: «Салтаксем вăрçăра йăлăха çитрĕç. Пурте киле каясшăн тăрăшаҫҫĕ. Çанталăк сивĕтнĕ май салтаксен шухăш-кăмăлĕ татах та ытларах начарланчĕ». 19-мĕш пехотнăй полкăн 7-мĕш ротăри салтак Вильгельм Эльман çапла кăтартса панă: «Вырăссем хирĕç тăрса кĕрешесси вăйлансах пырать тата эпир ытларах та ытларах сухатусем тӳсетпĕр. Салтаксене вăрçă йăлăхтарса çитерчĕ. Вăрçă пĕтессе салтаксем тӳсеймесĕр кĕтеҫҫĕ. Пурте пĕр шухăпа çеç пурăнаҫҫĕ — киле каясчĕ, теҫҫĕ вĕсем».

Нимĕç салтакĕ Раймунд Хэйм 1941 çулти октябрĕн 25-мĕшĕнче хăйĕн арăмĕ патне çапла çырнă: «Эпĕ çапла çеç калама пултаратăп: Россинăрд пĕр çулталăк хушши вăрçиччен Францире 10 çул хушши вăрçăттăм». Салтак Симон Баумэр октябрĕн 24-мĕшĕнче тăванĕсем патне çапла çырнă: «Эпир Мускав патне куҫса пынă чухне пирĕн çынсем калама çук нумайăн вилеҫҫĕ тата аманаҫҫĕ. Вырăссем шуйттан пекех вăйлăн хирĕç тăраҫҫĕ. Вырăссем пек тимлĕн тăрса çапăçакан тăшман урăх çуккине эпир походра çеç пĕлтĕмĕр. Тепĕр çур çулталăк иртес пулсан, эпир пĕтетпĕр».

* * *

Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин 24 çул тултаракан уява пирĕн çĕршыври ĕҫçыннисем стахановла движение çĕнĕрен хăватлăн çĕклентерсе янипе кĕтсе илеҫҫĕ. Амурстальстройри штукатур Дивеев ертсе пыракан бригада вăрçă пуҫланнăранпах нормăсене тăтăшах иртterсе тултарнă. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн бригада 5-шер норма тултарма пуҫланă. ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк рабочисенчен тăракан, Мартынов юлташ ертсе пыракан бригада нормăсене 300—400 процент тултарать.

Амур çинчи Комсомольск хулинчи машинăсем тăвакан заводра Карабалко юлташăн бригади сменăра 8 нормăран кая мар тултарать. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçленĕ кунсенче Иркутск хулинчи аш-какай комбинатĕнче двухсотниксен йышĕ икĕ хут ӳснĕ. Куйбышев ячĕпе тăракан çул çинчи депосенчен пĕринче ĕçлекен слесарь Тулов юлташ арматурщик, поршневик тата экипажник ĕҫĕсене туса пырать. Вăл нормăна 600 процента çити тултарса пыракан пулнă. Çак депора ĕçлекен слесарьсем Шекотуров, Двойников, Швец тата ытти сем те сменăра пилĕк норма ытла тултараҫҫĕ.

Ноябрĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Калинин фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕҫсен 15 танкне, 10 бронемашинине, 13 орудине, миномет сем темиçе батарейине тата салтаксемпе офицерсене 600 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кузнецов юлташ чăсĕнчи танкистсем, Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекенскерсем, ноябрĕн 1-мĕшĕнчи çапăçусенче нимĕҫсен 15 танкне, танка хирĕç перекен 2 орудине тата противникăн салтакĕсене 450 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕҫсемпе румынсен войскисен тылĕнче Бессарабипе Молдаван ССР территорине К. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ виҫĕ уйăх хушши çапăçать.

Çак вăхăт хушшинче отряд питех те вăйлăн ӳснĕ, унăн уйрăм групписем хăйсем тĕллĕн кĕрешекен единицăсем пулса тăнă, вĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăраҫҫĕ.

Отряд командирĕн дневникĕнчен темиçе сыпăк илсе кăтартатпăр.

«Июлĕн 25-мĕш. Эпир ылханлă захватчиксен тылĕнче. Юханшыв патĕнче ларатпăр. Пирĕн патран румынсемпе нимĕҫсен чăсĕсем ирте-ирте каяҫҫĕ. Эпир пиллĕкĕн, пирĕн пĕтĕмпе те икĕ винтовка çеç.

Августăн 3-мĕш. Çĕрле кая тăрса юлнă салтаксене тĕл пултăмăр. Кĕске вăхăт хушши çапăçрăмăр. Икĕ румына вĕлертĕмĕр, Икĕ винтовка, патронсем, гранатăсем тытса илтĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ эпир хĕçпăшаллаппа.

Августăн 5-мĕш. Вунă кун хушшинче отряд виҫĕ хут ӳсрĕ. Кӳршĕри П. ялĕнчен колхоз председателĕ Г. юлташ хăйĕн сывлăсемпех килчĕ. Çĕрле румынсен икĕ лавне тытса чартăмăр. Пирĕн хĕçпăшалсем татах та нумайланчĕҫ.

Августăн 10-мĕш. Отрядра халĕ ĕнтĕ 39 çын. Пилĕк кун хушши пынă çапăçусенче каллех румынсемпе нимĕҫсен 40 салтакне вĕлерсе пĕтертĕмĕр. Енер 2 пулемет тата 3 грузовой машина тытса илтĕмĕр.

Сентябрĕн 2-мĕш. Пĕр уйăх иртрĕ. Манпа пĕрлечи малтан килнĕ 4 партизан халĕ группăсен командирĕсем пулса ĕçлеҫҫĕ. Пирĕн хĕçпăшал питех те нумай, хамăр отряд пек тепĕр пилĕк отряда та хĕçпăшаллантарма пулать пулĕ тесе шутлатпăр. Разведка çине уйрăмăнах вăйлăн çаврăнса пăхатпăр. Пирĕн разведчиксем пĕтĕмпе 25 çын, вĕсем пурте автоматсемпе тата пистолетсемпе хĕçпăшалланнă. Иртнĕ пилĕк кун кăтартса панă тăрăх, отрядра кĕперсене, çуласемпе çуртсене сирпĕтме подрывниксен группине туни кирлĕ пулать. Çав ĕçе тума 7 çынна уйăрса лартрăмăр. Вĕсене румынсемпе нимĕҫсен минисемпе усă курма вĕрентетпĕр. Пĕр уйăх хушшинче румынсемпе нимĕҫсен 259 салтакне, 17 офицерне, 4 танка, 7 бронемашинăна, 9 орудине, 19 автомашинăна, 2 радиостанцине, 91 лава пĕтерсе тăкрăмăр, пĕр самолета пусе антартăмăр.

Октябрĕн 15-мĕш. Нимĕҫсем пире хирĕç янă пысăк карательнăй отряда çĕмĕрсе тăкрăмăр. Никама та каçару памастпăр, 76 салтака вĕлертĕмĕр, ытисем тарчĕҫ».

* * *

Ньиредьхази хулинче Венгри салтакĕсем хушшинче восстани тухнă, çав салтаксене Хĕвелтухăç фронтне яма палăртнă пулнă. Салтаксем казармăсенче питĕрĕнсе ларнă. Восстани тунă салтаксемпе вĕсене лăплантарма килнĕ жандармсем хушшинче юнлă тытăçу пулса иртнĕ, çав вăхăтра икĕ енчен те 50 çынна çити вилнĕ. Çакна май хулара демонстрацисем пулса иртнĕ. Венгри халăхĕ хăйне вăрçа туртса кĕнĕ Германи çине тăшманла пăхать. Венгрине килекен нимĕҫсем каçхине хула урамне тухма хăраҫҫĕ.

Совет самолечĕсем Данциг, Кенигсберг тата Рига çине кайса тапăнни

Ноябрĕн 3-мĕшпе 4-мĕш хушшинче çĕрле пирĕн самолетсем нимĕҫсен Кенигсберг, Данциг тата Рига хулисем çине кайса тапăннă. Çак хуласенчи çар тата промышленность объекчĕсем çине фугаснăй тата вут тивретекен бомбăсем пăрахнă. Вăйлă взрывсемпе пушарсем пулнине палăртнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен базисене тавăрăннă.

ЙĂЛТАХ ФРОНТ ВАЛЛИ

Пирĕн колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем юнлă фашизма хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн жирлине пурне те туса парас ĕмĕтпе ĕçлеҫҫĕ. Колхозсем тата колхозниксен хуçалăхĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараҫҫĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем параҫҫĕ. Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнчи (Комсомольски р.) «Красный Октябрь» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли тăвăтă кĕрĕк пиншак, кăçатăсем тата ытти ăшă тумтирсем пачĕҫ.

«Красный Октябрь» колхоз членĕсем ĕçсене срокчен туса пынă, ялхуçалăх продукчĕсене государствăна вăхăтра тăратнă фронта пысăк çитĕнӳсем тума май панине ăнланса тăраҫҫĕ. Колхоз тата колхозниксем государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарчĕҫ. Бригадăсем çитес кунсенчех авăн çапса пĕтереҫҫĕ. Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç те йĕркеллĕ пулса пырать.

«Правда»», «Красный клевер» колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем аван пулса пыраҫҫĕ. Çак колхозсем тата колхозниксем туслăхĕсем государство умĕнчи тĕттирӳ, аш-какай, сĕт-çу тата ытти обязательствăсене те тултарнă.

В. ВИКТОРОВ.

Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн

Çĕрпӳ районĕнчи «Луч» колхоз членĕсем пĕр шухăш-кăмăлпа пурăнаҫҫĕ, тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе, юнлă фашизма хăвăртрах çапса аркатма паттăр Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ пулăшу параҫҫĕ.

Колхоз çĕршыв оборонин фончĕ валли пĕр вăкăр пачĕ, колхозниксем кашни уйăхра пĕрер ĕçкунĕ çине тивекен тупăша парса тăраҫҫĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 4 мăшăр носки, 5 алшăлли, 9 мăшăр алшиш, 4 тир, 3 çĕлĕк, 2 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, 19 килограмм çăм пухса панă, колхозра çак ĕç халĕ те пулса пырать.

Колхозра пур ĕçсем те вăхăтра пулса пыраҫҫĕ. Анса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртнĕ. Октябрĕн 20-мĕшне авăн çапса пĕтернĕ. Авăн çапса пĕтернĕ хыççăн, малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, вăтам шутпа кашни гектартан 130 пăт ыраш, 98 пăт тулă, 91 пăт сĕлĕ тухнине палăртнă. Халĕ колхозра тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеҫсе пама хатĕрленес, тĕрлĕрен фондсем тăвас ĕçсем хĕрӳллĕн пыраҫҫĕ.

Колхоз ноябрĕн 1-мĕш тĕлне государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарчĕ. Колхозниксем хăйсен тӳлевĕсене те вăхăтра парса татассишĕн кĕрешеҫҫĕ.

Кунта общественнăй выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстересшĕн тăрăшаҫҫĕ. Фермăсем валли выльăхсем туянса çитернĕ. Выльăхсене хĕл каçарма апат çителĕклĕ.

Фермăра ĕçлекенсем планлă заданисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫĕ. М. Асанина, Т. Беляева доярккăсем хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесенчен çулталăк хушшинче 1350-шар литр сĕт суса илес вырăнне 9 уйăх хушшинче 1540-шер литр сĕт суса илнĕ. Чăх-чĕп тата сурăх фермисенче ĕçлекенсем те хăйсен пултарулăхĕсене кăтартаҫҫĕ.

«Луч» колхоз Иваново ялсоветĕнче çеç мар, районра та малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Колхоз тата колхозниксем Октябрь уявне ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеҫҫĕ.

П. ИВАНОВ.

Октябрь праздникне чыслăн кĕтсе илеҫҫĕ

Шупашкарти тумтирсем çĕлекен индпошив мастерскойĕнчи рабочисен коллективĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă уява пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Коллектив октябрь уйăхĕн планне 110 процент ытла тултарчĕ. Стахановка Анна Иванова юлташ октябрьти плана 370 процент тултарса, 4 хут ытларах ĕçлесе илнĕ. Руссакова юлташ нормăна 225 процент, Ершов юлташ 217 процент, Кузнецова, Каляканова, Севрюгина, Фролов юлташсем 170—180 процент тултарса ĕçлеҫҫĕ.

Çак кунсенче рабочисем ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене панă. ПВХО нормине 35 çын, ГСО нормине 30 çын «отлично» паллăсемпе панă.

Халĕ рабочисен коллективĕ Октябрь уявĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлет. 20 килограмм пăнулми, 50 сăмса тутри, 75 енчĕк тата ытти япаласем те хатĕрленĕ.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔН

Обязательствăсене срокчен тултараҫҫĕ

Ишлей районĕнчи колхозсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулни 24 çул тултарнă уява государство умĕнчи обязательствăсене тултарнине кĕтсе илес, çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем ытларах парас тесе кĕрешеҫҫĕ. Чылай колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене тултарчĕҫ. Районри 50 колхозра каçалхи çулхăн аш-какай, сĕт-çу парса татса, çитес çулхи обязательство шучĕпе аш-какай, сĕт-çу пама тытăннă.

Районри колхозсем пурте пекех государствăна çăм памалли обязательствăсене срокчен тултарчĕҫ. Халĕ вуншар колхозсем оборона фончĕ валли çăм параҫҫĕ. «Самолет» колхоз оборона фондне 20 килограмм çăм пачĕ.

Шурча ялсоветĕнчи «Авангард» колхоз уйрăмăнах лайăх ĕçлет. Пур колхозниксем те заем укçине тӳлесе татнă. Çĕршывра Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту пуçлансан, колхоз укçа-тенкĕ тӳлевĕсене ноябрĕн 1-мĕшне тӳлесе татма обязательство илнĕччĕ. Халĕ колхозăн укçа-тенкĕ енĕпе пĕр пус та парăм çук. Октябрĕн 25-мĕшне колхозниксенчен нумайĕшĕсем ялхуçалăх налогĕ, страховка укçисене парса татнă.

Колхоз 1941 çулпăн аш-какай парса татса, çитес çулпăн пама тытăнчĕ. Çитес çулхи аш-какай обязательствине 90 процент тултарнă. Оборона фондне пĕр ĕне, 10 килограмм çу панă.

С. ГОРЛАНОВ.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçлаҫҫĕ

ÇЕРПУ. Районри финанс работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса уява укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне 70 процентран кая мар тултарнипе кĕтсе илме пуланă. Малта пыракан финагентсем ăмăртăва анлăн сарса пырса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ытлашшипех тултарса пыраҫҫĕ. Çĕнĕ Сала ялсоветĕн финагенчĕ Терентьева юлташ ноябрĕн 3-мĕш тĕлне IV-мĕш квартал планне 85,8 процент пурнăçланă.

Çавăн пекех Шĕнер ялсоветĕн финагенчĕ Тарасов юлташ 83,3 процент, Сырмапуç ялсоветĕн финагенчĕ Семенов юлташ 77,5 процент тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Пушарпуç, Йĕкĕрвар, Первомайски, Туçа ялсоветĕсем те малти вырăнта тăраҫҫĕ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре кая юлса пыракан ялсоветсем те пур-ха. Чупай, Шуртавăш, Çĕнял ялсоветĕсем ноябрĕн 3-мĕш тĕлне IV-мĕш квартал планне 25 процент кăна пурнăçланă. Ку ялсоветсенчи финагентсем Федоровпа Зерняев юлташсем колхозниксем хушшинче массăллă агитаци ĕçне сарса пырас вырăнне хаклă вăхăта ялсовет канцелярийĕнче ларса иртереҫҫĕ.

Производствăллă çĕкленӳ

● ЭЛĔК. Кĕçĕн Туктапри çĕвĕ çĕлекен «Молния» артель хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать. Артель таварсем туса кăларманлă тăхăр уйăхри плана 100 процентчĕпех тултарнă. Артель членĕсем Октябрь уявĕ тĕлне çулталăкри плана 125 процентран кая мар тултарассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртаҫҫĕ. А. Данилов, Н. Александров, И. Казыкин, Е. Иванова юлташсем хăйсен хулленхи ĕç нормисене 120—130-шар процент тултараҫҫĕ.

Н. СМИРНОВ.

● Калинински районри колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, паха çитĕнӳсем тăваҫҫĕ. Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхоз уява авăн çапса пĕтернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет.

Çĕньял Явăшри тата Кивçурт Мăратри колхозсем уяв тĕлне авăн çапса пĕтереҫҫĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн кĕрешнипе пĕр вăхăтрах колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеҫҫĕ. Сăкăтри колхозниксем 15 мăшăр çăматă, 17 тир, 5 мăшăр çăм кăлăпă брюки, 530 мăшăр пир тăла, 221 мулаххай, 720 мăшăр алшипсемпе чăлхăсем тата ытти те пухса панă.

Пухăннă çăмран «Чăваш ЦИК» колхоз членĕсем 200 мăшăр, «Елăш» тата «Кульмет» колхозсен членĕсем 100-шер мăшăр, «Пионер» колхоз членĕсем 70 мăшăр кăçатă йăваласа хатĕрлерĕҫ.

Апакассинчи тата Хорнсорти промартельсем 1.110 тир турĕҫ. Тунă тирсенчен Çĕрпӳри профшкул ăшă кĕрĕксемпе алсасем çĕлет. Ку вăхăтчен 25 кĕрĕк, 50 мăшăр алса çĕленĕ. Хатĕрленĕ ăшă тумтирсенчен тылăйĕшне фронта ăсатнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлесе парас ĕçе пионерсемпе шкул ачисем те хутшăнаҫҫĕ. Патăрьелĕнчи, Ямашри, Первомайскри туллимар вăлăм шкулсенчи пионерсемпе шкул ачисем икĕ пин ытларах енчĕк çĕлесе панă.

Г. ПЕТРОВ.

Вĕренекенсен парни

КАНАШ. Иккĕмĕш номерлĕ шкулти 6-мĕш «Б» класра вĕренекенсен пухăвĕ пулнă. Класс руководителĕ Анна Артемьевна Алешина ачасене Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕ çинчен каласа панă. «Айтăр пĕр-пĕр красноармеец патне посылка ярар»,—тенĕ ачасем класс руководителĕн каласăвĕ хыççăн. Çавăнтах пĕр артиллери полкĕнчи Сергей Артемьев красноармеец патне парне яма шут тытнă.

Сергей Артемьев Канаш районĕнче çуралнă. Иртнĕ çулла пионерсен районри лагерĕнче ĕçленĕ. Унтан Мускаври Государство Университетне вĕренме кĕнĕ. Халĕ урса кайнă фашистсене хирĕç паттăрăн çапăçать.

Çав кунах ачасем хăйсен пĕчĕк парнисене хатĕрлеме тытăннă. Рима Дьяконова сăмса тутри çĕленĕ. Нина Пахомова папирос, табак, супăнь илсе пынă.

Ытти ачасем хутсем, конвертсем, карандашсем хатĕрленĕ. Вĕсен пĕр пĕчĕк те паха посылка пулса тăнă. Посылкăна пĕрле çакăн пек çыру янă:

«Пирĕн юратнă Сергей Артемьевич! Сирĕн пата пионерла хĕрӳллĕ салам тата пĕчĕк посылка яратпăр. Эпир тăван çĕршыва мухтавлăн сыхлатăр, эпир сире отлично вĕренме сăмах паратпăр...

Сывă пулăр! Фашистсене тĕппипех çапса çĕмĕрĕр! Киле çĕнтерекенсен мухтавĕпе тавăнăр!»

Çивĕч те пултарулăллă ачасем вĕренеҫҫĕ ку класра. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртеҫҫех.

Т. ИВАНОВ.

Ĕçсыннисен пулăшăвĕ

Йăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана çĕнтерме! Çак лозунгпа хавхаланса, Çĕрпӳ районĕнчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне çĕнтерӳ тума никсĕлми çирĕп вăй парса тăраҫҫĕ. Фронта пулăшас ĕç, уйрăмах Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн, палăрмаллах вăйланчĕ.

Паянхи кун тĕлне районри ĕçсыннисем оборона фондне заем облигацийĕсене 153.770 тенкĕлĕх хывнă. Кусемсĕр пуçне 53 центнер тĕттьрă, 9 центнер утă, 600 çамарта, 300 литр сĕт тата ытти те панă.

Оборона фондне укçа-тенкĕ тата ялхуçалăх продукчĕсем панисĕр пуçне, ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тата тумтирсем хатĕрлемели япаласем пухас ĕçе активлăн хутшăнаҫҫĕ. Паянхи кун тĕлне районри комиссин складне 2400 тир, 1145 килограмм çăм, 140 фуфайка, 120 ватăлă брюки, 530 мăшăр пир тăла, 221 мулаххай, 720 мăшăр алшипсемпе чăлхăсем тата ытти те пухса панă.

Пухăннă çăмран «Чăваш ЦИК» колхоз членĕсем 200 мăшăр, «Елăш» тата «Кульмет» колхозсен членĕсем 100-шер мăшăр, «Пионер» колхоз членĕсем 70 мăшăр кăçатă йăваласа хатĕрлерĕҫ.

Апакассинчи тата Хорнсорти промартельсем 1.110 тир турĕҫ. Тунă тирсенчен Çĕрпӳри профшкул ăшă кĕрĕксемпе алсасем çĕлет. Ку вăхăтчен 25 кĕрĕк, 50 мăшăр алса çĕленĕ. Хатĕрленĕ ăшă тумтирсенчен тылăйĕшне фронта ăсатнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлесе парас ĕçе пионерсемпе шкул ачисем те хутшăнаҫҫĕ. Патăрьелĕнчи, Ямашри, Первомайскри туллимар вăлăм шкулсенчи пионерсемпе шкул ачисем икĕ пин ытларах енчĕк çĕлесе панă.

Г. ПЕТРОВ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕ пулса иртнĕ. Унта Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ «Нью-Йоркские листы» ятлă хаçатăн Чехословакири корреспонденчĕ г-н Вашек Германи информаци бюровĕ октябрĕн 26-мĕшĕнче «нимĕçсемпе итальянецсене кăларса ярас тесе Англипе Совет Союзĕ Афганистана хĕнерлени çинчен» пĕлтерни пирки çырса панă ыйтăва хирĕç çапла каланă:

ССР Союзĕн Афганистанри посолĕ Михайлов юлташ, Совет правительстви хушшипе, октябрĕн 11-мĕшĕнче Афганистанăн премьер-министрне представлени тунă. Афганистан халăхĕ çине туслă туйăмпа пăхакан тата Афганистанăн никама пăхăнманлăхне хисеплекен Совет правительстви çак представление — Афганистан государстви малалла та вăйланса пырассине пур енчен те пулăшса тăма, çавăн пекех тата ССР Союзĕпе Афганистан хушшинчи экономикăллă отношенисене çирĕплетсе сарса пыма яланах хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ. Совет правительстви хушшипе посол çакна татах тепĕр хут çирĕплетсе пĕлтернĕ: Афганистана политикăпа территори тĕлĕшĕнчен тĕкĕнес майпа Совет Союзĕн нимĕнле агрессивнăй шухăшсем те сук тата икĕ çĕршывăн интересĕсене те усă кӳрес тесе Афганистанпа яланах туслă пурăнас тата пĕр шухăшлă пулса ĕçлес политикăна пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшать. Анчах та Афганистанра Афганистан учрежденийĕсемпе Афганистанăн хăшĕпĕр министерствисенче ĕçлесе тăракан нимĕçсемпе итальянецсем пурри, вĕсем Совет Союзĕн интересĕсене хирĕç тăшманла ĕçсем туса тăни Совет правительствине шиклентерет тата Совет Союзĕпе Афганистан хушшинче юлташлă тата кӳршĕллĕ отношенисем ăнăçлă сарăлса пырас тĕлĕшпе хăрушлăх кăларса тăратать. Нимĕçсемпе итальянецсен фашистла групписен Афганистан территорийĕ çинче Совет Союзне тата Афганистана хăйне те хирĕçле сăтăрла ĕçĕсем гитлерла Германия Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн уйрăмах сĕмĕрленсе кайрĕç. Гитлерла Германин çар министерствинче тата общественнăй ĕçсен министерствинче ĕçлекен агенчĕсем: Шенк, Фишер, Венгер, Кнерлейн тата ытти çавăн пекех тата коммерсантсем пулнă пек хăтланса ĕçлекен агентсем: Гильхаммер, Спауде, Лауфеберг — юлашки вăхăтра террористсен тата диверсантсен бандисене организацилес тĕлĕшпе уйрăмах хăйсен ишĕлтерӳллĕ ĕçĕсене вăйлатса ячĕç. Çав бандăсем советăн чикĕри посчĕсем çине тапăннă, совет республикĕсене — Туркменистана, Узбекистана тата Таджикистана гитлерла агентсене каçарса яма хăтланнă.

Нимĕçсемпе пĕрлех Афганистанра итальянецсем те ишĕлтерӳллĕ ĕçсем туса тăнă.

Совет правительстви ячĕпе ССР посолĕ çакăн пек каланă: Афганистан правительстви, шел пулсан та, Германипе Италин çак агентурин усал ĕçĕсене тивĕçлипе отпор памасть. Посол çакна астутарнă: ССР Союзĕпе Афганистан хушшинче нейтралитет тата пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен 1931 çулти июнĕн 24-мĕшĕнче тунă договорта çапла каланă: «Килĕшсе татăлакан енсем хăйсен территорийĕ çинче килĕшсе татăлакан тепĕр енне сиен тума пултаракан группировкăсене организацилеме, вĕсене ĕçлеме ирĕк памаççĕ тата чăрса лартаççĕ, çавăн пекех уйрăм çынсене те сиенлĕ ĕçсем тума памаççĕ».

Çӳлте каланине асра тытса, Совет правительстви Афганистан правительствине çак сывăх вăхăтрах нимĕçсен тата итальянецсен колонийĕсен членĕсене пурне те Афганистанран кăларса яма сĕнме кирлĕ тесе шутланă тата Германипе Италин Афганистанри миссийĕсем Афганистан тĕлĕшпе те, Совет Союзĕ тĕлĕшпе те нимĕнле тăшманла ĕçсем туни те ан пултăр тесе вĕсем мĕн ĕçлесе тăнине кирлĕ пек сăнаса тăмалла тăвас пулать, тенĕ.

ССР посолĕ тунă заявление Афганистан правительствипе парламент комиссийĕ пăхса тухнă. Октябрĕн 16-мĕшĕнче Афганистанăн ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ ССР Союзĕн Кабулри посолне çапла пĕлтернĕ: Афганистан правительстви «Афганистанпа ССР хушшинчи туслă отношенисене шута илсе тата Афганистан хăйĕн кӳршисене, уйрăмăнах ССР Союзĕпе чунтан-чĕререн туслăн пурăннине Совет правительствине татах тепĕр хут кăтартас тесе, ССР правительстви панă канашпа килĕшме йышăнса, нимĕçсемпе итальянецсене Афганистанран кăларса ямалла тунă».

Пĕр вăхăтрах, çак ыйту пирккиех, Великобританин Кабулри посланникĕ Афганистан правительствине хăйĕн правительстви ячĕпе тивĕçлĕ заявлени тунă.

Пирĕн пата çитнĕ сведенисем тăрăх, октябрĕн 29-мĕшпе 30-мĕшенче нимĕçсемпе итальянецсем Афганистанран тухса кайма пуçланă.

Совет Союзĕпе Афганистан хушшинчи отношенисем пирки тăракан ыйтăвăн тĕп тупсăмĕ çакăн пек ĕнтĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тивĕçлисене—парти ретне

ВĂРМАР. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Малта пыракан тӳрĕ çынсем парти ретне кĕреççĕ. И. М. Няхуков юлташ чылай çулсем хушши Осоавиахим райсовечĕн инструкторĕ пулса ĕçленĕ. Çак вăхăтра вăл снайперсем, стрелоксем, значкистсем сахал мар хатĕрленĕ. Вăл çар ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ çынсенчен нумайĕшĕсем халĕ çĕршыва сыхласа хăварассишĕн паттăррăн кĕрешеççĕ. Няхуков юлташ хăй те вĕсен малти ретĕнче. Фронта каяччен вăл ВКП(б) членĕн кандидатне кĕнĕ.

М. В. Зайцев юлташ комсомол ретĕнче ӳснĕ. Вĕреннĕ, учитĕле тухнă. Халĕ вăл Тупахри кĕçĕн вăтам шкулра вĕренӳ пай заведующийĕ пулса ĕçлет. Çав вăхăтрах ВЛКСМ райкомĕн вĕренекен çамрăксемпе ĕçлекен яланлăх комиссине ертсе пырать, Чăвашсен педагогика институчĕн заочникĕнче тăрать. Пур çĕрте те ĕлкĕрсе пырать вăл: ачасене те вĕрентет, хăй те вĕренет, вожатăйсене те пухса каласать. Вăл вĕрентнĕ предметпа пĕлтĕр пĕр ача та янăх отметка илмен, нумайĕшĕсем отлично та хорошо вĕреннĕ. Унăн вĕрентĕвĕ кăçал та ăнăçлă пулса пырать. Лайăх ĕçленине кура нумай пулмасть ăна парти кандидатне илнĕ.

П. Н. Савельев юлташ отечественнăй вăрçă участникĕ. Çапăçура аманса киле таврăннă. Халĕ вăл «Тукас» колхозăн кладовщикĕ пулса ĕçлет, Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă япаласем пухас ĕçе активлăн хутшăнать. Ăна ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ.

Мăнçырмари «Çĕнĕ пурнăç» колхоза 1941 çулти çуракине вăхăтра тата лайăх пахалăхлă туса ирттернĕшĕн республикăри «Хисеп хăми» çине кĕртнĕ. Колхоз кун пек хисепе тивĕçлĕ пулни председатель В. А. Александров юлташ лайăх ертсе пынинчен нумай килнĕ. Колхоз кĕрхи ĕçсене те ăнăçлă вĕçлерĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна çĕрулми, çăм, натуроплата парса татрĕ, часах тырпул, аш-какай, укçа-тенкĕ парас плансене тултарать. Лайăх ĕçленине кура В. А. Александров юлташ ВКП(б) членĕн хисеплĕ ятне тивĕçлĕ пулнă.

Çавăн пекех Вăрмарти «Спортинвентарь» фабрика работникне Н. В. Лазарев юлташа, хатĕрлев ĕçĕн Кавал участокĕнчи агентне Н. В. Ширков юлташа ВКП(б) членне илнĕ. Ширков юлташ районри лайăх ĕçлекен агентсенчен пĕри.

Хальхи вăхăтри темăпа тăвакан докладсем

КУКЕÇ. Ĕçсыннисем политика ыйтăвĕсемпе, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе хальхи вăхăтра нихăçанхи пек мар вăйлăн интересленеççĕ. Вĕсем отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнчи ĕçсем çинчен, немĕç захватчикĕсем тытса илнĕ çĕршывсенчи лару-тăру çинчен, çав çĕршывсенче партизанла движени вăйланса пыни çинчен пĕлесшĕн. Колхозник колхоз правленине е ялсоветне пырать-и, хăйĕн юлташне урăра тĕл пулать-и,—вăл тӳрех çĕнĕ хыпарсем пирки ыйтса пĕлме тытăнать. Çакă вăл урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен кашни совет çынни хамăрăн тăван çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăха пĕтĕм чун-чĕрипе туять.

Ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе, вĕсем интересленекен ыйтусене тĕрĕс çутатса парас тесе, пирĕн массăллă-политикăллă ĕçе тĕплĕн туса пыни кирлĕ.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕн парти кабинечĕ ку тĕлĕшпе юлашки вăхăтра чылай паха ĕçсем турĕ. Вăл хăй тавра пропагандистсемпе агитаторсене ытларах явăçтарма, парти райкомĕ çумĕнчи докладчиксемпе ытларах усă курма пуçларĕ.

Парткабинет çитес уйăхшăн план тунă чухне ăста тата мĕнле темăпа доклад тумаллине, докладчикĕ кам пулмаллине тĕплĕн палăртса хурать. Докладчиксен группинчи 40 çынтан докладсемпе калаçусем ирттерес ĕçе нумайĕшĕ активлăн хутшăнаççĕ. Тулик Хураски вăтам шкулĕнчи истори преподавателĕ, ВКП(б) райкомĕ çирĕплетнĕ докладчик «Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçи» темăпа 6 колхозра доклад туса пачĕ. Колхозниксем докладсене итлеме нумайăн пухăнаççĕ, хальхи тапхăрти ыйтусемпе вĕсем питех те интересленеççĕ. Çак темăпах парткабинет заведующийĕ Петрова юлташ Хыркасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче докладсем туса пачĕ. ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Тимофеев юлташ «Трудовик» колхозра «Совет халăхĕн патриотизмĕ» темăпа доклад турĕ. Çав докладах вăл Апаш ялсоветне кĕрекен колхозсенче те туса парать. Кунсăр пуçне, Тимофеев юлташ «1812-мĕш çулти отечественнăй вăрçă тата Наполеон империне çĕмĕрни» ятлă темăпа çĕнĕ доклад хатĕрлет.

Район центрĕнчи рабочисемпе служащисем валли НКВД районри отделĕн начальникĕ «Çар тата государство вăрттăнлăхне сыхласси» темăпа доклад туса пачĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Миронов юлташ «Фашистла Германин тылĕнчи партизанла вăрçă» темăпа Карачура ялсоветĕнчи колхозсенче докладсем туса пама хатĕрленет. Çавăн пекех ытти докладчиксем те нумайĕшĕсем паха темăсемпе докладсем хатĕрлеççĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа ВКП(б) райкомĕ çумĕнчи докладчиксен вăйĕпе пĕтĕмпе 52 доклад туса ирттернĕ. Кунсăр пуçне Шупашкартан килнĕ лекторсем 19 лекци вуласа панă.

Парткабинет çумĕнче консультантсен групписем те пур. Кӳкеç вăтам шкулĕн учителĕ, çак группăра тăраканскер, хальхи вăхăтри ыйтусем тăрăх часчасах консультацисем парать.

Анчах та çак ĕçсене çителĕклĕ теме сук-ха. Хальхи вăхăт парткабинетăн ĕçне темиçе хут ытларах лайăхлатма хушать.

Т. ЛОГИНОВ.

Октябрь уявĕ ячĕпе кучченеççем

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсоветне кĕрекен «Автогигант» колхоз членĕсем Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли кучченеççем хатĕрлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене кучченеç тата 60 килограмм сысна какайĕ, 10 килограмм çу, 17 чăх, 2 хур тата çăмартасем хатĕрлеççĕ. Колхоз председателĕ А. Васильев юлташ 5 килограмм аш-какай, 10 килограмм тулă çăнăхĕ, М. Матюшкина, А. Федонская, Н. Горбунов, А. Антонов, А. Ильина юлташсем икшер чăх параççĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене Аслă уяв ячĕпе кучченеççем пама сурăх какайĕ, виçĕ чăх, 50 çăмарта тата икĕ килограмм çу хатĕрленĕ.

Р. М.

КОНСТИТУЦИ УРОКĔНЧЕ

СССР Конституцине вĕрентес ĕçе Ишлейри вăтам шкулта Кузьмина юлташа шанса панă. Вăлах тата — истори преподавателĕ те. Анчах çак хисеплĕ ĕçе Кузьмина юлташ мĕн тĕрĕ тĕрĕс пурнăçласа пынипе шкул директийĕ çийĕнчех интересленмен. Çакна пула вара Кузьмина юлташ хăйĕн ĕçĕ çине ытла та çиелтен пăхма, ăна хаклamасăр туса пыма пуçланă.

Кузьмина юлташ ирттерекен урокĕнчен пĕринче, сăмахран, çакăн пек ĕç пулса иртрĕ. Урок планĕ тăрăх вĕренекенсене çĕнĕ темăпа паллаштармалла. Тема ячĕ: «СССР — рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви». Социализмлă государство мĕнле йĕркеленсе кайни тата вăл мĕнле тĕрекленсе пыни çинчен преподаватель историри фактсемпе çирĕплетсе парассăн пулчĕ. Çавна май ăна социализмлă революци çинчен те, пролетари диктатури çинчен те калама тиврĕ. Кузьмина юлташ темĕн тĕрлĕ йăнăшсем туса пĕтерчĕ. Пролетари диктатури çинчен, сăмахран, çапла ăнлантарса пачĕ: «Диктатура пролетариата есть неограниченное законом насилие и господство пролетариата над буржуазией, пользующееся поддержкой пролетариев всех стран». Çакăн пек определени пачах тĕрĕс марри пуриншĕн те палăлă пулин те, преподаватель ăна Ленинран илнĕ пек туса кăтартрĕ.

Çапла вара Кузьмина юлташ çав тĕле Ленин çырнă тăрăх мар, хăй тахçан тата тăкăрăн илтни тăрăх кăна ăнлантарса пачĕ. Ленина илес пулсан, вăл вара акă мĕнле определени панă: «Диктатура пролетариата есть неограниченное законом и опирающееся на насилие господство пролетариата над буржуазией, пользующееся сочувствием и поддержкой трудящихся и эксплоатируемых масс».

Çакăн хыççăнах преподаватель тепĕр пысăк йăнăш турĕ. Вăл, советсен II съезчĕ çинчен калама пуçласа, çапла ăнлантарса пачĕ:

— Ленин, революци çĕнтерсе илнĕ хыççăн, ноябрĕн 7-мĕшĕнче, Мускав Совечĕн ларăвĕнче çапла каланă: «Эпир революцин иккĕмĕш этапне вĕçлерĕмĕр, унăн виççĕмĕш этапне куçрăмăр. Çак этапăн задачи — буржуаллă революцие социализмлă революци çине куçарасси пулать», тенĕ. Пачах тĕрĕс мар! Мĕншĕн тесен: ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускав Совечĕн ларăвĕ мар, Советсен II съезчĕ пулса иртнĕ; çавăнпа та В. И. Ленин çав кун Мускав Совечĕн ларăвĕнче мар, Советсен II съездĕнче пулнă; революцин виççĕмĕш этапĕ çинчен В. И. Ленин нихăçан та каламан, буржуаллă-демократиллĕ революци социализмлă революцие çити ӳссе куçасси çинчен вĕрентнĕ чухне вăл яланах революцин иккĕмĕш этапĕ çинчен каланă; Советсен II съездне илес пулсан та, В. И. Ленин унта та ун пек сăмах каламан, тата Советсен II съезчĕ хăй те Мускавра мар, Петроградра пулса иртнĕ. Анчах та Кузьмина юлташăн çак фактсем паллă мар пулас.

Экономикăллă çĕнĕ политика çинчен те Кузьмина юлташ тĕрĕс мар ăнлантарать. Вăл каланă тăрăх, НЭП çине куçни социализм строительствин ыйтăвĕсенчен пăрăнни пулать имĕш. Акă мĕнле ăнлантарать вăл:

— Социализм тăвас ыйтăва Совет власăн малтанхи кунсенчех лартнă. Анчах 1921 çулта НЭП çине куçмалла пулнă, мĕншĕн тесен, пирĕн ун чухне политикăллă-экономикăллă база пулман. Çавăнпа та капиталистсене ыран панă. Çак база 1925—26 çулсенче кăна çирĕпленме пуçланă. Çапла вара кулаксен класне пĕтерес политика çине куçма май килнĕ.

Пĕтĕм историе пăсса, ăна кутăн-пуçăн çавăрса хуни çинчен каламаççĕ-и ĕнтĕ çак фактсем?

Вĕренекенсем умне лартнă ыйтусем те, çавăн пекех, тĕрĕс мар. Сăмахран, кам ответлеме пултартăр-ха çакăн пек ыйтусем çине:

— Пирĕн Совет правительствинче власть кам аллинче тăрать?

— Пирĕн Совет правительствинче миçе класс?

Преподаватель государствăпа правительство хушшинчи уйрăмлăх çинчен вуласа пăхма та ӳркеннĕ пулас.

Çакăн хыççăн Кузьмина юлташ историпе Конституци преподавателĕ пулма пултарать-и-ха ĕнтĕ?

Р. МАЛЮТИН.

Фермăра тăрăшса ĕçлекенсем

ШАХАСАН. Енĕш ялсоветне кĕрекен «Красноармеец» колхозăн лаша, ĕне, сурăх, сысна тата чăх-чĕп фермисем пур. Колхоз выльăх-чĕрлĕхрен кашни çулах пысăк тупăш илет. Кăçал та ĕне ферминчен 6641 тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Колхозра уйрăмăнах ĕне ферми лайăх ĕçлесе, паха тĕслĕх кăтартать. Ку фермăна иккĕмĕш çул ĕнтĕ коммунист Л. Павлов ертсе пырать. Выльăхсене лайăх ĕçлекен колхозницăсем пăхаççĕ. Фермăра ĕçлекен скотниксем Л. Никитинпа М. Миронова юлташсем ĕнесене вăхăтра апат параççĕ, шăварассĕ, тасалаççĕ.

Государство планĕ тăрăх фермăра 35 ĕне пулмалла, халĕ унта пурĕ 39 ĕне, сăвакан ĕнесем — 11. Кăçал 8 уйăх хушшинче 11 ĕнерен 16288 литр сĕт суса илнĕ.

1941 çулта государствăна сĕт парас плана июнь уйăхĕнчех 100 процент тултарнă. Çавăн пекех государствăна аш-какай та срокченех парса татнă.

Павлов юлташ скотниксемпе доярксене ĕне пăхма, сĕт сума вĕрентет, «Олень», «Матама», «Галина» ĕнесенчен кашни кунах 14—15-шер литр, «Марье», «Бородавка» ĕнесенчен 10—11 литртан кая мар сĕт илнĕ.

Г. ШАШКОВ.

Теплицăсене хĕле хатĕрлеççĕ

Ишлей районĕнчи Салабайри «Красное знамя» колхоз пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе темиçе çул хушши кăтартуллăн ĕçлет. Пахча-çимĕçсем лартса, вĕсене лайăх пăхса çитĕнтерни колхоза пысăк тупăш парать. Кăçал пахча-çимĕçсенчен 35 пин тенкĕ ытларах тупăш илнĕ. Кунсăр пуçне 25 пин тенкĕлĕх улмуççисем сутмалли пур. Теплицăсенче çитĕнтернĕ çимĕçсене, сăмахран сухан, хăяр тата ытти çимĕçсене, пурĕ 16 пин тенкĕлĕх сутнă.

Халĕ йăрансем, теплицăсем пушаннă ĕнтĕ. Анчах пахча-çимĕç бригади, çуллахи пекех, хĕрӳ ĕçре. Теплицăсене юсаççĕ, вĕсем валли тăпра тата тислĕк хатĕрлеççĕ. Помидор вăррисене шăтарма хатĕрлесе хунă.

С. ГОРЛАНОВ.

—o—

Шăлан çырли пухнă

ÇĔМĔРЛЕ. Пояндайкинăри туллимар вăтам шкулти пионерсемпе шкул ачисем шăлан çырли пухнă. Нумай пулмасть типĕтĕ 20 килограмм шăлан çырлине Тăван ялпоне кайса панă.

С. БАТЬКОВ.

Францире 5 минута хушши тунă забастовка ăнăçлă пулнă

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Кунта килекен сведенисем çакна кăтартса параççĕ: 100 заложнике ирсĕррĕн асаплантарса вĕлернине хирĕçлесе пĕтĕм Францире забастовка тума генерал де Голль чĕннине пĕтĕм Францире анлăн йышăнса илнĕ.

Палăртнă сехетре—октябрĕн 31-мĕшĕнче 16 сехет те 5 минутăра Париж-ра Рено, Ситроен тата ытти заводсенче ĕçе чарса лартнă, Париж урамĕсенче çав вăхăтра пулнă çынсем пурте тротуарсем çинче чарăнса пĕр тапранмасăр 5 минута хушши тăнă. Хулари электростанцисем нумайĕшĕ электричество тама чарăннă, анчах пĕр-ик минутăран ток панă. Çакăн чухне гестаповецсем тата Германи войскисем хĕçпăшалпа усă курнă пулĕ тесе шутласçĕ. Октябрĕн 31-мĕшĕнче иртен пуçласах гестаповецсемпе Германи салтакĕсене ура çине тăратнă, анчах нумай чухне вĕсем забастовка пысăк пулнине кура ĕçе хутшăнма хăранă. Çапах та каçалапа забастовка пулнă пур предприятисенче те массăллăн арестлесси пуçланса кайнă.

Лотарингири Мец, Страсбург тата ытти хуласенчен пĕлтернĕ тăрăх, забастовкăна пулма парас мар тесе, гестаповецсем октябрĕн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрлех «иккĕлентерекен» темиçе çĕр рабочие арестленĕ. Апла пулин те, Лотарингири предприятисемпе рудниксем пурте пилĕк минутлă забастовкăна ăнăçлăн ирттернĕ.

Пилĕк минутлă забастовкăна пурте хутшăнни çинчен çавăн пекех Виширен, Лионран, Клермон-Ферранран тата ытти хуласенчен те пĕлтереççĕ.

Франците çаратни

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Германи фашисчĕсем Франци халăхне çаратаççĕ. Америкăри печет пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çул хушшинче французсем хăйсене валли пĕтĕмпе те пĕр миллион мăшăр кăна атă-пушмак илнĕ. Çав вăхăтрах оккупациленĕ зонăра ĕçлекен 12 фабрика Германие 4800 пин мăшăр атă-пушмак ăсатнă. Оккупацилемен Францири предприятисем те халĕ Германин çар заказăсене пурнăçа кĕртеççĕ. Нимĕçсем валли ĕçлемен предприятисене чĕртавар памаççĕ, е пачах хупса лартаççĕ. Резина промышленноçĕ ĕçлемест. Монлюсон хулинчи «Денлоп» фирмин резина шинасем тăвакан заводне сентябрь уйăхĕнчех хупса лартнă.

Илнĕ сведенисем тăрăх, оккупациленĕ зонăра нимĕçсем сахалтан та тулă тухăçĕн çуррине тытса илнĕ. Германи çарĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче хĕлле çапăçма лашасем сутăн илессине вăйлăн туса пырать. Çапла, сăмахран, Бретанирен нимĕçсем 5 пин лаша илсе тухнă.

Выльăх апачĕ çитмен пирки, выльăхчĕрлĕх ĕрчетесси чарăнса ларнă. Статистикăллă даннăйсем тăрăх, Францире выльăх-чĕрлĕх шучĕ кашни уйăхрах 4 процент чакса пырать.

Оккупацилемен зонăри хресченсем горючи çитмен пирки аван çапас ĕçре ирĕксĕрех тăпачăсемпе усă кураççĕ.

Италин никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартни

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Нью уорд» ятлă журналта пичетленĕ статьяра Женевăри паллă журналист-итальянец Карло Прато çапла çырать: халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те паллă, çĕршыва тытса тăрас тĕлĕшпе те, çарсене ертсе пырас тĕлĕшпе те Италин никама пăхăнманлăхĕ пĕтсе ларнă. Гитлер хушсан вара Германи посолĕ çавăнтах Муссолини патне кĕрсе те каять. Анчах Муссолинин Германи посолне курмалла пулсан, ăна вара Германин посолĕ хăй хăçан йышăнма кăмăл тăвать, çавăн чух кăна йышăнать. Час-часах Германи посолĕ Италин фашистла кабинечĕн заседанийĕсенче пулать, унта вăл хисеплĕ вырăн йышăнса ларать.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе килни

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла нимĕç самолечĕсен групписем Мускав çине вĕçсе килнĕ. Хула районĕ çине вĕçсе кĕнĕ тăшманăн темиçе самолечĕ пăрахнă нумай мар фугаснăй бомбăсем пурăннă малли çуртсем тата пушă вырăнсем çине ӳкнĕ. Жертвăсем пур.

Комсомолецсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем

ИШЛЕЙ. Районри комсомолецсем чылайăшĕ ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах Хĕрлĕ Çара кайнисен вырăнне комсомолецсем нумай йышăнчĕç. Халĕ 16 комсомолец ялсовет секретарĕ пулса тăраççĕ. «Ишек» тата «Алино» колхозсен председателĕсем фронта кайнă хыççăн вĕсен вырăнĕнче К. Илюхинпа П. Алангов комсомолецсем ĕçлеме тытăнчĕç. Çавăн пекех фронта кайнисен вырăнĕнче 5 комсомолец финагент пулса ĕçлеççĕ. Ямайкасси ялсоветĕнчи комсомолец Н. Анисимов сентябрь уйăхĕнче укçа-тенкĕ пухас плана 106 процент, виççĕмĕш квартал планне 98 процент тултарнă. Çĕньял-Покровски ялсоветĕнче финагент пулса комсомолка Ф. Яруткина юлташ ĕçлет.

Комсомолецсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ.. Комсомолка Ю. Трофимова юлташ нумайранпа ĕнтĕ «Автогигант» колхозра ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл Ишлей райсовечĕн депутачĕ. Паянхи куна унăн фермăра 14 сăвакан ĕне. Вĕсенчен кăçал 13.500 литр ытла сĕт сунă, 460 килограмм çу туса илнĕ. Ферма сĕт суса илес тĕлĕшпе çултăлăк планне тултарнă. Сĕт-çу обязательствисене те май уйăхĕнчех пурнăçланă.

Ю. Трофимова ĕнесене, çамрăк пăрусене тăрăшса пăхнă. Çуллахи вăхăтра ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ палăрмалла ӳснĕ. Çавăнпа колхозниксене йӳнĕ хакпа 82 килограмм çу, 10 пин литр ытла уçланă сĕт, 350 килограмм тăпăрчă сутнă. Государствăна панисĕр пуçне, ку таранччен фермăран 17.339 тенкĕ тупăш илнĕ. Халĕ Трофимова юлташ выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленет. Витесене юсаса дезинфекци тунă.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри Антонина Малыгина комсомолка ертсе пыракан ĕне ферми те паха тĕслĕхсем кăтартать, унăн тупăшĕ çулран-çул ӳссе пырать.

«Тимĕрçырми» колхозăн ĕне ферми калама çук начар ĕçленĕ. Ферма нимĕнле тупăш та паман. Колхоз государство умĕнчи сĕт-çу обязательствине икĕ çул хушши тӳлесе татман пулнă. Ферма заведующийĕ пулса комсомолка Зинаида Ягунина ĕçлеме пуçласан, ферма чылаях малалла кайрĕ, унăн тупăшĕ те ӳсрĕ. Колхоз государство умĕнчи кăçалхи сĕт-çу обязательствине пурнăçлать те ĕнтĕ.

Хăле кăме хатĕрленес ĕçре комсомолецсем колхозсене активлăн пулăшса пыраççĕ. Вĕсем силос хывса хăварас, çулçăллă апат хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Октябрĕн 20-мĕш тĕлне районĕне 3896 тонна силос хывса хăварнă пулсан, вăл шутран комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 1000 тонна ытла хывнă. «Синьял», «Хозандай», «Тимĕрçырми», «Красная Чувашия», Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсем ку тĕлĕшпе уйрăмах хастарлăн ĕçлерĕç.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх 70 тонна силос хывса хăвармалла пулнă пулсан, комсомолецсен пуçарулăхĕпе 104 тонна хывса хăварнă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем хĕллене хатĕрленсе пăрусем валли ăшă вите тунă çĕрте хутшăнса ĕçлеççĕ.

Кунпа пĕрлех комсомолецсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолецсем колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен, ăшă тумтирсене мĕн тума пухни çинчен тĕплĕн ăнлантарса панипе пĕрлех ку ĕçре хăйсем пример кăтартаççĕ.

«Красный танк» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацинче 8 комсомолец. Вĕсем 5 тир, 2 мăшăр çăмалшиш, 2 килограмм çăм панă. Пуçламĕш организацин секретарĕ П. Сидоров юлташ ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси членĕ пулса ĕçлет.

Туллимар даннăйсем тăрăх, районри комсомолецсем 238 тир, 28 мулаххай, 86 килограмм çăм, 36 мăшăр алшиш, 27 мăшăр носки т. ыт. те панă.

Комсомолецсем Оборонăн Государственный Комитечĕ пурне те çар ĕçне обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен йышăннă постановлението пурнăçласа пырас тĕлĕшпе те аван ĕçлеççĕ. Район центрĕнчи вĕренӳ пунктĕнчи Афанасьев, Агандеев, Пикшиков юлташсен отделенийĕсенчи боецсем çар дисциплинине пĕр пăркаланмасăр пăхăнса пырасçĕ. Боецсенчен вĕренĕве кая юлса, кун сиктерсе çӳрекенсем пачах çук. Халĕ вĕсем стройпа тĕрĕс утма, противогазпа усă курма, штыкпа çапăçма отлично вĕренсе çитнĕ. Анчах уйрăм комсомолецсем çар ĕçне вĕреннĕ çĕрте хăйсене дисциплинăсăр тыткалани, командир приказне пурнăçлассинчен пăрăнни, занятисене вăхăтра çитменни те пулкалать.

Райцентрти вĕренӳ пунктĕнче вĕренекен М. Алексеев, Н. Филиппов тата А. Смирнов комсомолецсем октябрĕн 30-мĕшĕнче занятине пĕр сăлтавсăрах пыман. Асăннă комсомолецсем хăшпĕр чухне занятисенче дисциплинăна пăсаççĕ, панă ыйтусем çине ответлеймеççĕ.

Малалти пуçламĕш организацинчи Андрей Назаров комсомолец часовой обязанноçĕсене манса, поста пăрахса кайнă. Постра боецсен вăйĕпе тунă винтовка, граната макечĕсем, кĕрĕсесем тата вĕренӳри кирлĕ ытти хатĕрсем тăрса юлнă. ВЛКСМ райкомĕ, çӳлте асăннă комсомолецсем çинчен пĕлнĕ пулин те, паянхи кунччен те пăхса тухса тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

ВЛКСМ пуçламĕш организацисенче колхозри малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илессипе çине тăрса ĕçлеççĕ. Сыбайкассинчи «Ырăш» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацин секретарĕ П. Бычков юлташ колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлет. Кăçал вăл 150 ĕçкунĕ ытла тунă. Унта пĕрлех комсомолецсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерессипе çамрăксен хушшинче тăрăшса ĕçлет. Çак кунсенче колхозра малта пыракан икĕ çамрăк Ленинла комсомол ретне кĕчĕç. Вĕсенчен пĕри колхозри стахановец С. Скворцов юлташ. Вăл ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать.

Кашни çамрăк хăйне ĕçре кăтартса парса комсомол ретне кĕме тăрăшать. Халĕ татах виçĕ çамрăк комсомол ретне илме ыйтса заявленисем панă.

А. МИХАЙЛОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти-пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7127

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК НАССР. Заказ № 557. Ф. 6. 58 84 п. л.